Район администрацийĕн кунĕнчен

# Хамăр çинех ытларах шанмалла

***Мартăн 30-мĕшĕнче район администрацийĕн черетлĕ кунĕ Ярапайкасси ял тăрăхĕнче иртрĕ. Район администрацийĕн, федераллă службăсен районти пайĕсемпе управленийĕсен ответлă ĕçченĕсем малтанах территори предприятисемпе организацисенче, культура, сывлăха сыхлас ĕç, вĕрентӳ учрежденийĕсенче пулса курса вĕсенчи коллективсемпе тĕл пулнă хыççăн итогсене пĕтĕмлетме Ярапайкассинчи Культура çуртне пухăнчĕç. Кунта вара ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Голубев иртнĕ çулхи ĕç-хĕл пирки отчет туса пачĕ. Район администрацийĕн кунĕн итогĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тыл ĕçченĕсем Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халаллану юбилей медалĕсене тивĕçрĕç. Хыççăн вара шкул ачисем пĕчĕк концерт кăтартрĕç.***

Район администрацийĕн кунĕн итогĕсене тишкернĕ май çавă палăрать. Ял тăрăхĕн территорийĕнче 16 ял вырнаçнă май, татса памалли ыйтусен калăпăшĕ те пĕчĕкех мар темелле. Чи малтанах демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру та шухăшлаттармалла. Иртнĕ çул пĕтĕмпе 31 ача çуралнă. Çав вăхăтрах вара 45 çын çĕре кĕнĕ.

Паллă ĕнтĕ, пур ĕçсене те пахалăхлă та пур енлĕн йĕркеллĕ пурнăçлама укçа-тенкĕ çитсе пымасть. Иртнĕ çул ял тăрăхĕпе бюджетпа пĕтĕмпе 4 миллион та 874 пин тенкĕ тăкаклама пăхса хунă пулнă. Вăл шутран ытларах укçа-тенкĕпе культура учрежденийĕсене тытса тăма усă курнă. Ку тĕллевпе 2 миллион тенкĕне яхăн уйăрнă. Спорт мероприятийĕсем валли 13 пин тенкĕпе, социаллă политика енĕпе 647 пин тенкĕпе, тирпей-илем кĕртес енĕпе 943 пин те 900 тенкĕпе усă курнă.

Çăвасене йĕркене кĕртессипе те ĕçлемен мар. Шурчара 321 метр тăршшĕ карта тытса çавăрнипе пĕрлех çăвасем çине çӳп-çап пухма 5 контейнер вырнаçтарнă. Урамсенчи çулсене кирлĕ шайра тытса тăрассипе, ваннă вырăнсене юсассипе те сахал мар тăрăшнă.

Сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе чылай ĕç туса ирттереççĕ. Ку енĕпе тĕрлĕрен ăмăртусем йĕркелессине пăхса хунă. Сăмахран, февралĕн 23-мĕшĕнче яланах арçынсен командисем, мартăн 8-мĕшĕнче хĕрарăмсен командисем хушшинче ăмăртусем йĕркелеççĕ. Апрель уйăхĕн пĕрремĕш шăмат кунĕнче вара Совет Союзĕн Геройĕн И.Г. Мешаковăн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăрту пулать. Кунпа пĕрлех футбол, волейбол енĕпе ялсен, шкул ачисен командисем хушшинче те ăмăртусем пулса иртеççĕ. Командăсем вара ытти çĕрте иртекен ăмăртусене те тухса çӳреççĕ, япăх мар кăтартусемпе савăнтараççĕ. Сыпай пĕви çинче кăçал хоккейла выляма площадка йĕркеленĕ.

Халăхпа пĕрле пухăнса ирттермелли мероприятисем сахал мар. Кусем вĕсем Аслă Çĕнтерӳ уявĕ те, Ватă çынсен кунĕ т. ыт. те. Палăртрăмăр ĕнтĕ, пур мероприятие те кирлĕ шайра ирттерме укçа-тенкĕ çитеймест. Çавна май ку енĕпе яланах пулăшма тăрăшакансене – «Герой» хуçалăх ертӳçине Р.Н. Тимофеева, А.Г. Сорокин фермера, С.В. Яргеев, Э.О. Смелов, А.В. Смирнов, Э.И. Баранов, А.В. Ершов предпринимательсене ырăпа кăна асăнмалла.

Тавралăха тирпей-илем кĕртесси, ăна кирлĕ шайра тытса тăрасси – уйрăмах пысăк ыйту. Ку енĕпе Ярапайкасси ялĕнче чылай ĕç пурнăçланă. Субботниксем те сахал мар ирттернĕ. Культура çурчĕ умĕнчи ватăлнă йывăççене касса çамрăккисене лартса хăварнă. Палăксем çывăхĕнчи тирпейлĕхе тивĕçтерессипе, кирлĕ мар вырăнсене тăкса тултарнă çӳп-çапа тасатассипе тимленĕ.

Ялсенчи тасалăхпа йĕркелĕх унта пурăнакансенчен хăйсенчен килнине ăнланакансенчен йышĕ ӳсни савăнтарать. Килсем умĕнчи тĕрлĕ тасамарлăха, строительство материалĕсене, тимĕр-тăмăра пуçтарассипе чылай тăрăшнă. Ку енĕпе чи малтанах Милютакасси, Ярапайкасси, Шурча ялĕсенче пурăнакансене ырăпа асăнса хăвармалла. Депутатсенчен вара В.Л. Хлебников, Ю.Г. Енисеев, Ф.Ф. Паргеева тимлĕ пулнă. Çӳп-çап проблеми çурхи кунсем çитсе килнĕ май каллех çивĕччисен шутне тухасси паллă. Çавăнпа та тасалăх пирки никамăн та манма кирлĕ мар.

Çĕнĕ урамсене электричество кĕртессипе тăрăшаççĕ. 9 урам валли ку тĕлĕшпе проектсене хатĕрленĕ ĕнтĕ.

Уйрăм ыйту – ăнăçсăр çемьесем. Шел пулин те, хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕ пур çинчех çемьере йĕркеллĕ воспитани илеймесĕр çитĕнекен ачасем те çук мар. Асăннă çемьесемпе ĕçлессине лайăхрах шая çитерес пулать.

Халăхпа тĕл пулнă май кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем те тухса тăраççĕ. Акă Итакачкасси ялĕнче кĕпер тăвасси, плотинăпа пĕвесене, çăлсене тасатасси ыйтусем çуратаççĕ. Ку ыйтусене пĕтĕмпех халăхпа пĕрле пулса татса пама тивет. Ял старостисемпе вырăнти депутатсен те айккинче юлмалла мар, тĕрĕссипе вĕсен хăйсен çак ĕçсене йĕркелесе ертсе пымалла.

Пĕлтерĕшлĕ ыйтусем, чăнах та ĕнтĕ, çук мар. Апла пулин те вĕсене пурте пĕр тĕллевлĕ пулсан татса пама майсем те, мелсем те ытларахах палăрчĕ район администрацийĕн Ярапайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче ирттернĕ кунĕнче.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Алла-аллăн тытăнса ĕçлес пулать

***Район администрацийĕн черетлĕ кунĕ апрелĕн 2-мĕшĕнче Муркаш ял тăрăхĕнче иртрĕ. Унăн итогĕсене вара Муркашри Культура çуртĕнче пĕтĕмлетрĕç.***

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин отчет туса панă тăрăх, территорире паянхи куна 4468 çын пурăнать. Муркаш ялĕпе – 3250 çын. Вăрçă ветеранĕсем 9, вилнĕ салтак арăмĕ 1 шутланать.

Ял тăрăхĕнчи специалистсем çирĕплетнĕ графикпа кашни эрнерех тунти кунсенче иртнĕ эрнери ĕçсене сӳтсе яваççĕ, çынсен ыйтăвĕсене татса пама майсем палăртаççĕ.

Кашни кун тенĕ пекех ял тăрăхĕнче пурăнакансем тĕрлĕ ыйтусемпе ял тăрăхне пыраççĕ. Иртнĕ çул çырусемпе 43 çын тухнă. Тĕрлĕ ыйтусемпе 4477 çын пынă. 14 пуху ирттернĕ тата 16 хутчен халăхпа курса калаçнă. Кашни çыннăн хăйĕн ыйтăвĕ. Вĕсене май килнĕ таран вырăнтах татса пама тăрăшнă.

Ял тăрăхĕн территорийĕнчеуйрăм çынсен çĕр участокĕсем 1129 шутланаççĕ. Регистраци витĕр тухнисем – 1066. Вĕсене кая хăвармасăр регистрацилес пулать.

Паянхи куна нумайăшĕ пахча çимĕç акса-лартса ӳстерме панă çĕр лаптăкĕсемпе усă курмасть е урăх çынна усă курма панă. Нумайăшĕн аренда договорĕ те çук. Ку вара саккуна пăсни пулать. Уншăн явап тыттарма та пултараççĕ. Çавăнпа та уйрăмах хваттерсенче пурăнакансен (5–10 сотка çĕр лаптăкĕ пуррисен) ял тăрăхне пырса килĕшӳ тăвас пулать, аренда тӳлевĕ тӳлемелле.

Шывпа тивĕçтересси – уйрăм ыйту. Хальхи вăхăтра çынсене пахалăхлă шывпа тивĕçтересси пысăк проблема пулса кайрĕ. Шыв пăрăхĕсем, 35–40 çул каялла хунисем, çĕрсе пĕтнĕ ĕнтĕ. Март–апрель уйăхĕсенче аварисем те çине-çинех пулнă. Çуллахи вăхăтра шыв башнисем те шыв парса çитерейменççĕ. Чылайăшĕ шывпа пахчасенчи çимĕççене шăварма усă курать. Çавна май малашне кашни килтех шывпа мĕн чухлĕ усă курнине тĕрĕслекен счетчиксем лартсан тĕрĕсрех пулать.

Ку таранччен ял тăрăхĕнчи ялсене Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх шывпа тивĕçтерсе тăнă пулнă. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара шывпа тивĕçтересси ял тăрăхĕ çине куçнă. Халĕ шыв пăрăхĕсемпе системисене тытса тăрассине пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ хăй çине илнĕ. Çавна та палăртса хăвармалла: Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ те халăха шывпа тивĕçтерессипе иртнĕ çул 250 пин тенкĕ тăкак курнă.

Çӳп-çап юлашки çулсенче ялсенче, ялсен çывăхĕнче нумайланса кайни палăрать. Сĕнтĕр патĕнчи свалкăна хупнă май халĕ пĕтĕм тасамарлăха Красноармейскине турттарма тивет.

Нумай хваттерлĕ çуртсем патĕнчен çӳп-çапа илсе тухма майсем пур. Анчах та ял çыннисем уншăн укçа тӳлесшĕн мар. Çӳп-çап пур килтен те тухать. Уншăн вара пурин те тӳлеме тивет.

Тавралăха тирпей-илемлĕ тытса тăрассипе те тимлемелли çук мар. Ял хушши, ял сăн-сăпачĕ – кашни çыннăн, ялта пурăнаканăн пичĕ-куçĕ. Çавна май пурин те тирпейлĕрех пулмалла.

Иртнĕ çул килĕшӳ туса ял хушшисене тирпейлĕ тытса тăма пĕр çынна явăçтарнă пулнă. Кăçал та тепĕр çынна çак ĕçе явăçтарма тивет пулĕ. Кунпа пĕрлех такси автомашинисем тăнă вырăнсенче тасамарлăх пулни пирки асăнмасăр май çук. Ку енĕпе те йĕрке тумаллах.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тĕп задачи – пур çынсене те пурăнма, ĕçлеме тата канма пур условисене те туса парасси. Çавăнпа та вăл пулăшакансене хăйĕнчен 62 экземпляр хаçат çырăнса панă. Иртнĕ çул 40 экземпляр пулнă.

Иртнĕ çулсенче ялсен урамĕсенче асфальт çулсем сарассипе тимленĕ, тротуарсене çĕнетнĕ. Анчах та тумаллисем татах пур-ха. Уйрăмах Çурлатри ялĕнче. Паянхи куна магазин патне тракторсăр çитме те йывăр. Çавна май кунта çул тăвассипе проект хатĕрлесе пĕтернĕ, анчах эксперт комиссийĕ витĕр тухаймаççĕ. Урамăн пĕр енче газ пăрăхĕсем хунă, тепĕр енче – шыв пăрăхĕ. Урамĕ те сарлакăшĕпе нормăна тивĕçтермест.

Урамсене çутă кĕртессипе те ĕçсем пыраççĕ. Виçĕ урам тĕлĕшпе проектсене хатĕрлесе экспертизăна панă ĕнтĕ. Вак чул турттарса Çĕньял Муркаш çăви çине кайма çул тунă. Мĕншĕн тесен пĕве татса кайсан кунта килме те май пулман, Хорнуй ялĕн ани урлă çӳренĕ.

Урамсене çутатса тăрассипе перекетлĕрех пулмалла. Пĕлтĕр те ку тĕллевпе планланинчен ытларах укçа-тенкĕ тăкакланă. Çавăнпа та çуллахи вăхăтра çутă сӳнтерме тивет.

Вăрттăнлăх мар, хальхи вăхăтра эрех-сăра ĕçекенсем, обществăлла йĕркелĕхе пăсакансем сахал мар. Вĕсемпе профилактика, çемье канашĕсене чĕнсе калаçусем ирттернĕ.

Ял тăрăхĕнче йĕркеллĕ мар çемьесем 4 шутланаççĕ. Çав çемьесенче вара ачасем кирлĕ пек воспитани илме пултараймаççĕ, йĕркеллĕ апатланаймаççĕ.

Çавна та палăртмалла. Ял тăрăхĕн территорийĕнче спортпа туслисен йышĕ ӳссех пырать. Çуллахи вăхăтра ял тăрăхĕнче яланах спартакиада иртет. Унта организацисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем активлă хутшăнаççĕ. Тĕрлĕ ăмăртусенче Сергей Софронов, Елена Потапова, Алексей Слепнев, Зоя Потапова, Тоня Смирнова тата ыттисем те хăйсене лайăх енчен кăтартаççĕ.

Район администрацийĕн кунне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов хутшăнчĕç, вăрçă ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă юбилей медалĕсене пачĕç.

Хыççăн пухăннисене Шупашкарти коопераци институтĕнче вĕренекенсем концерт кăтартрĕç.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

Район администрацийĕнче

# Хисеп грамотипе чысланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне **Лидия Кимовна ПЕТРОВАНА** тата асăннă хуçалăхри выльăх пăхакана **Марина Витальевна МИХЕЕВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» усă акционерлă обществăри оператора **Валентина Владимировна СЛЕПНЕВАНА**, ял хуçалăх продукцине тирпейлекен отрасльте нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн «Муркашри сĕт завочĕ» усă акционерлă обществăн аппаратчикне **Валентина Арефьевна ХРУСТАЛЕВАНА**, обществăлла ĕçри хастарлăхшăн «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă общество водительне **Владислав Витальевич ЯНДИМИРКИНА** февралĕн 15-мĕшĕнче район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Пĕчĕк предпринимательство кунĕнчен

# «Район аталанăвĕ сирĕнтен нумай килет»

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Ларура район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова пĕчĕк предприятисен ĕçĕ-хĕлĕ çинче тĕплĕн чарăннă май юлашки 5 çул хушшинче районти «2007-2011 çулсенче пĕчĕк хуçалăх формисене аталантарасси» программăна пурнăçа кĕртме пурĕ 156 миллион тенкĕ укçа хывнине, çав шутран район бюджетĕнчен çулсеренех 3-шер миллион тенкĕ уйăрнине палăртрĕ.

Эльвира Иосифовна районти 32 предприятин алкоголь продукцине сутмалли лицензи пуррине, вĕсенчен 30-шĕ– пĕчĕк тата вăтам предприятисем пулнине палăртрĕ. Алкоголь продукцине 163 точкăра сутаççĕ, вĕсенчен 40-шĕ – пĕчĕк бизнесăн. Тĕрĕслекен тата право йĕркине тĕрĕслекен органсемпе пĕрле ирттернĕ тĕрĕслевсенче ку енĕпе йĕркене пăснă тĕслĕхе тупса палăртман.

Эльвира Иосифовна предпринимательсене «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафона активлă хутшăнма чĕнсе каларĕ.

**ХАМĂРĂН ТУТЛĂРАХ, ХАМĂРĂННЕХ ТУЯНАР**

Пĕчĕк предпринимательство кунне пуçтарăннисем кредит илмелли йĕркепе, налук тӳлессинчи çĕнĕлĕхсемпе те паллашрĕç. Пуриншĕн те усăллă тепĕр самант вăл – продукци туса кăларакансемпе пĕчĕк тата вăтам бизнес представителĕсем район территорийĕнче туса кăларакан продукцие халăх патне çитерессипе пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеме калаçса татăлчĕç. Районта вара сахал мар продукци туса кăлараççĕ. «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество кăна 140 тĕрлĕ продукци туса кăларать. Унăн продукцийĕсене Мăн Сĕнтăр райповĕн 46 магазинĕнче сутаççĕ. Çавăн пекех Муркаш райповĕпе, предпринимательсемпе килĕштерсе ĕçлеççĕ, хамăр республикăра тата Марий Эл республикинче пурăнакансем те хапăлласах туянаççĕ вĕсен продукцине. Мăн Сĕнтĕрсем туса кăларакан продукци ассортименчĕ çулсеренех 7-9 тĕслĕ çĕнĕ йышши продукципе пуянланать.

Муркаш райповĕ туса кăларакан продукци пирки те çавнах каламалла. Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕн çумĕ Андрей Алексеевич Данилов Муркашсемпе Мăн Сĕнтĕрсем пахалăхлă продукци кăларнине, республикăри конкурссенче вĕсем яланах малти виçĕ вырăна йышăннине палăртрĕ.

Пĕчĕк предпринимательство кунĕнче «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Л.Г. Ильгечкин предприятипе тачă çыхăнса ĕçлекен пĕчĕк бизнес представителĕсене Тав çырăвĕсемпе парнесем парса тав турĕ.

Юлашкинчен фойере «Моргауши-Хлеб», «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем тата республикăри ытти предприятисен продукцийĕпе паллашрĕç, активсе пăхрĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

Вулакансем валли

# Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш кĕнеке издательствинче январь-февраль уйăхĕсенче ачасене валли, вĕрентӳпе методика, илемлĕ тата наука литературине пичетленсе тухнă.

**Б.Л. Борлен**. Зоопаркра.
Сăвăсем. Автор ачасене зоопарка чĕнет.
**В.Г. Кервен.** Асамлă мăлатук (Иссумбоси).
Сăвăласа çырнă яппун юмахĕ.
**Ю.С. Сементер**. Хушка, Зорька.
Сăвăлла калав.
Вăрçă вăхăтĕнчи ялти пурнăçа сăнланă.
**Н.А. Васильева.** Теплые и холодные цвета.
Чăвашла тата вырăсла калавсем.
**Г.А. Дегтярев**. Изучаем чувашский язык.
Чăваш чĕлхине вĕренмелли пособи.
**Л.В. Кузнецова.** Чăваш композиторĕсен юррисем (Песни чувашских композиторов).
Чăваш композиторĕсем çырнă ача-пăча юррисен пуххи.
Книга памяти жертв политических репрессий. В 2-х томах.
Репрессиленĕ ентешсем çинчен каласа панă.
**Ю.С. Сементер**. Ĕмĕрсем параççĕ алă. (Веков рукопожатие). Сăвăсем.